25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
23
КĔҪНЕРНИКУН
95(6030) №

Чăваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

Краснодар крайӗнчи Выселковски районри Н. К. Крупская ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсемпе колхозницисем чӗнсе калани

КРАСНОДАР КРАЙӖНЧИ КОЛХОЗНИКСЕМПЕ КОЛХОЗНИЦĂСЕНЕ СОВЕТ СОЮЗӖНЧИ КОЛХОЗНИКСЕМПЕ КОЛХОЗНИЦĂСЕНЕ

Хаклӑ юлташсем! Пиччесемпе шӑллӑмсем, аппасемпе йӑмӑксем! Аслӑ Совет Союзӗн ывӑлӗсемпе хӗрӗсем!

Пирӗн тӑван ҫӗршыв хаяр кунсене пурӑнса ирттерет. Ҫынҫиен Гитлер пуҫтарса тӑракан фашистла ирсӗрсем Совет Союзне хирӗҫ пуҫласа янӑ вӑрҫӑ вунӑ уйӑх хушши пырать ӗнтӗ.

Гитлерла захватчиксем мӗнпур совет халӑхӗнчен хӑйсен чурисем туса хурасшӑн, пирӗн колхозниксенчен вӗсене совет влаҫӗпе колхоз стройӗ мӗн панине пӗтӗмпех туртса илесшӗн.

Фашистла мерзавецсен юнлӑ ури айӗнче пирӗн тӑвансем — украинецсемпе белоруссем, тӑшман тытса илнӗ районсенчи вырӑс ҫыннисем асапланаҫҫӗ.

Пирӗн геройла Хӗрлӗ Ҫар гитлерла йыткӗтӗвӗсене Мускав патӗнче, Ростов патӗнче, фронтӑн ытти чылай участокӗсенче ҫапа-ҫапа аркатрӗ. Анчах те тӑшмана аркатса тӑкман-ха, унтан та ытларах,—ӑна пӗтерсе тӑкман-ха. Умра йывӑр кӗрешӳ тӑрать!

Совет Союзӗн Геройӗ генерал-майор Доватор командир пулса ертсе пыракан корпусри казаксен-гвардеецсен геройла ӗҫӗсем пире савӑнтарса хавхалантараҫҫӗ. Ҫав корпусри хӑюллӑ та паттӑр казаксем-гвардеецсем вӗсем пирӗн Кубань ҫыннисем пулса тӑнине, вӗсен ҫулӑм пек вӗри учӗсем Кубань ҫеҫен хирӗн анлӑ талккӑшӗнче ӳссе ҫитӗннине пурте лайӑх пӗлеҫҫӗ.

Ылханлӑ тӑшмана хирӗҫ кӗрешекен пирӗн колхозниксен, трактористсемпе комбайнерсен паттӑр ӗҫӗсемпе эпир мухтанса хӗпӗртетпӗр. Пирӗн Кубань тӑрӑхӗнчи колхозсем, ытти мӗнпур колхозсем пекех, фронта боецсем те, боецсем валли утсем те, фронта мӗн кирлӗ ҫавна пурне те панишӗн тата халӗ те парсах тӑнӑшӑн эпир савӑнатпӑр. Нумаях пулмасть кӑна пирӗн станица доброволецсен ҫӗнӗ эскадронне пухса йӗркелесе фронта ӑсатрӗ.

Ҫуракине ирттерни чухне нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан отечественнӑй вӑрҫӑн ҫак кунӗсенче эпир хамӑрӑн тивӗҫлӗхе лайӑх ӑнланатпӑр. Ҫӗнтерӳ хӑй тӗллӗн килменнине эпир лайӑх ӑнланатпӑр. Ҫӗнтерӗве организацилемелле. Пирӗн ҫулпуҫ Сталин юлташ: «Пирӗн колхозниксем, арҫынсемпе хӗрарӑмсем, хӑйсен уйхирӗсенче ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлени тата вӗсем фронтпа ҫӗршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чӗртавар ытларах та ытларах парса пыни кирлӗ» тесе каланӑ сӑмахсене эпир яланах асра тытатпӑр. Сталин юлташӑн ҫав кӑтартӑвӗсене пурнӑҫа кӗртсе пырса, эпир ҫураки планне вӑхӑтра та пӗтӗмӗшпех тултарассишӗн халӗ ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлетпӗр.

Пирӗн колхоз ирхи пучахлӑ тырӑсемпе хӗвелҫаврӑнӑш акмалли плана тултарнӑ та ӗнтӗ. Ҫав культурӑсене эпир 546 гектар акнӑ. Эпир хамӑр умма гектартан 120 пӑт тырӑ туса илес задача лартнӑ. Ҫакӑ вӑл пӗлтӗр кашни гектартан пухнинчен 30 пӑт ытларах пулать.

Анчах ҫакӑ вӑл пурте мар-ха.

Ирӗке тухнӑ районсенчи тата фашистла оккупантсенчен малашне ирӗке тухакан районсенчи колхозниксен пурнӑҫӗ пире уйрӑмӑнах шухӑшлаттарать.

Ҫав районсенче колхозсене аркатса тӑкнӑ, колхозниксен ҫуртйӗрӗсене ҫунтарса янӑ, вӗсен пурлӑхӗсене гитлерла вӑрӑ-хурахсем ҫаратса пӗтернӗ. Ҫав колхозниксене аякран пулӑшу памасӑр хӑйсен колхозӗсене йӗркелеме, хӑйсен пурнӑҫӗсене ҫӗнӗрен пуҫласа яма йывӑр пулать. Ҫапла эпир ирхи ҫуртырӑсем акмалли плана пурнӑҫа кӗртнӗ хыҫҫӑн колхозниксен пухӑвне пухӑнтӑмӑр та хамӑр тӑван ҫӗршыв оборонин тӗреклӗхне мӗнле майпа татах та ытларах ҫирӗплетесси ҫинчен, фашистла пусмӑртан ирӗке кӑларнӑ колхозсемпе колхозниксене пулӑшасси ҫинчен шухӑшласа пӑхрӑмӑр, вара хамӑрӑн колхозра оборона фондне тата фашистла захватчиксенчен ирӗке кӑларнӑ колхозсемпе колхозниксене пулӑшмалли фонда тума шут тытрӑмӑр. Ирхи ҫуртырӑсене акмалли плана тултарнӑ хыҫҫӑн ӗнер эпир оборона фончӗ валли тата колхозсемпе колхозниксене пулӑшма планран ирттерсе 12 гектар тулӑ акса хӑвартӑмӑр. Григорий Иванович Лискун бригади 4 гектар, Иван Дмитриевич Лягуша бригади—3 гектар, Федор Антонович Маляр бригади—3 гектар тата Нина Ивановна Яковцева бригади—2 гектар акрӗҫ. Планран ирттерсе оборона фончӗ валли акнӑ ҫав 12 гектар ҫинчи тырпула эпир юратса пӑхса ҫитӗнтерӗпӗр, ӑна тӗрӗс-тӗкел пуҫтарса кӗртсе, пӗтӗмӗшпех Хӗрлӗ Ҫара тата фашистла ирсӗрсенчен инкек тӳснӗ колхозсемпе колхозниксене парӑпӑр.

Краснодар крайӗнчи тата мӗнпур Совет Союзӗнчи колхозниксемпе колхозница юлташсем! Эпир сире пирӗнтен пример илме чӗнетпӗр. Кашни колхозрах планран ирттерсе оборона гектарӗсем тата фашистла оккупацирен инкек тӳснӗ колхозсемпе колхозниксене пулӑшмалли гектарсем акса хӑварӑр! Кашни колхозра планран ирттерсе оборона фончӗ валли акса хӑварнӑ икӗ виҫӗ-пилӗк-вунӑ гектар, пӗрле пухсан, ҫӗршер пин гектар пулать, ҫакӑ вӑл пире вуншар миллион пӑт тӗштырӑ ҫӗнӗрен хушса парать.

Ҫураки планне тултарнӑ хыҫҫӑн кашни колхоз оборона фончӗ валли тата фашистсенчен инкек тӳснӗ колхозсемпе колхозниксем валли темиҫешер гектар акса хӑварма пултарассине эпир ҫирӗппӗн шанса тӑратпӑр. Ҫакна тума пур ҫӗрте те, кашни колхозрах май пур.

Хаклӑ юлташсем, ҫакна асра тытӑр: фашистла захватчиксен ури айӗнче пулнӑ колхозниксем пирӗнтен пулӑшу илмесӗр хӑвӑрт ура ҫине тӑма пултараймаҫҫӗ. Эпир иккӗленместпӗр, эпир чӗнсе калани ҫине Совет Союзӗн пур районӗсенчи колхозниксемпе колхозницӑсем те пӗр шухӑш кӑмӑллӑ пулса хавхаланса ответлӗҫ.

Ленин—Сталин партийӗ пире пӗр-пӗрипе тӑванла пӗтӗҫсе тӑма, халӑхсем хушшинче иксӗлми туслӑх тытса пыма вӗрентсе ҫитӗнтерни. Халӗ хӗн-хур тӳснӗ колхозниксемпе пӗрле вӑрҫӑччен эпир колхозлӑ пурнӑҫӑн хавасланӑхӗпе телейне пӗрле валеҫнӗ. Вӗсене эпир халь хи йывӑр вӑхӑтра та манса хӑвармӑпӑр, вӗсене хӑйсен колхозӗсене тата харпӑрхӑйӗн хуҫалӑхӗсене хӑвӑртрах ура ҫине тӑратма пулӑшӑпӑр.

Хамӑрӑн тӑвансене тӑванла пулӑшу парар!

Кашни колхозрах ҫураки планӗнчен ирттерсе оборона фончӗ валли тата фашистла захватчиксенчен инкек тӳснӗ колхозсемпе колхозниксене пулӑшас ӗҫ валли ҫӗнӗрен ҫӗр лаптӑкӗсем акса хӑварар!

Хамӑрӑн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑйхӑватне тӗреклетсех пырар!

Фашистла захватчиксене пӗтӗмӗшпех тата таткӑлӑнах ҫапса аркатассишӗн!

Хамӑрӑн ҫӗнтерӳшӗн!

Сывӑ пултӑр колхоз хресченӗсен тусӗпе учителӗ, пирӗн аслӑ тӑван ҫӗршывӑн полководецӗ Сталин юлташ!

Н. К. Крупская ячӗпе тӑракан артелӗн колхозникӗсем: **Т. Слюсарь, О. Трубникова, Г. Лискун, И. Лягуша, Е. Хацкова, В. Безручко, Н. Яковцева, Ф. Маляр, А. Белавицкая, А. Перекрестова, К. Глуценко, М. Шамрай, М. Скрябко, У. Хроменко, А. Коломийцева, О. Заикина, Мартыненко, У. Моргунова, А. Олейникова, Н. Колесникова, В. Атетина, Н. Шкрябко, Е. Соломкина, А. Михайлова, Н. Жерди, А. Довженко, Е. Науменко, Е. Смирнова, Б. Лопатченко, Н. Теблецкая, Е. Назаренко, К. Ливинская, Г. Абраменко, К. Иванов, Ф. Мищенко, П. Коломенко, Е. Гришина, Терная, М. Нагорный, В. Хлыстун, П. Склярова, В. Анищенко, М. Малюкова, А. Галыга, М. Кисиль, М. Белоус, Н. Лыкова, Я. Максименко, М. Шесилова, Е. Куц, У. Украинцева, В. Бурыгина, Т. Бурилина, П. Шестакова, М. Тоцкая, Рябоштанова, Л. Горбачова, П. Попова, А. Пустощелова, С. Цыганок, В. Погорелов, Л. Нощенко, Д. Довгалева** тата ыттисем те — пӗтӗмпе 240 ҫын алӑ пуснӑ.

ИРӖКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНСЕНЧИ КОЛХОЗСЕНЕ ПУЛĂШМА

КАНАШ. Малта пыракан колхозсем ирӗке кӑларнӑ районсене пулӑшма вӑрлӑх, ялхуҫалӑх машинисемпе инвентарьсем уйӑраҫҫӗ. Яманкассинчи Доронин ячӗпе тӑракан колхозра ҫавӑн пек 20 центнер тӗштырӑ, 2 плуг, пӗр лаша, Чкалов ячӗпе тӑракан колхозра 10 центнер пӑри, 2 плуг уйӑрнӑ. **И. Максимов.**

СОВЕТСКОЕ. Ирӗке кӑларнӑ районсенчи колхозсем валли Элешкушкӑри «Труд» колхоз 8 центнер, Якимкинӑри «Коммунар» колхоз 7 центнер, «Восток» колхоз 6 центнер вӑрлӑх уйӑрчӗ.

С. ФЕДОРОВ.

ТАСС ОПРОВЕРЖЕНИЙӖ

«Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн Бернри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: Италири фашистла хаҫат «Гадзетта д'Поло» хыпар сарнӑ, ҫав хыпар тӑрӑх Америкӑн Япони хулисем ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ самолетӗсен базӗ «совет территорийӗнче вырнаҫнӑ» иккен.

ТАСС ҫапла пӗлтерме полномочи илнӗ: ҫав пӗлтерӳ суя пӗлтерӳ пулса тӑрать, унӑн провокацилле тӗллевӗ уссӑнах курӑнса тӑрать.

ВОЕННĂЙ ЗАЕМА ҪЫРĂНСА ИЛСЕ НИМӖҪ ЗАХВАТЧИКӖСЕМ ҪӖМӖРСЕ ХĂВАРНĂ ХАЛĂХ ХУҪАЛĂХНЕ УРА ҪИНЕ ТĂРАТМА ПУЛĂШАР!

Облигацисене тытакансем хушшинче ӗҫлессине манма юрамасть

Республикӑра государствӑн 1942 ҫулти Военнӑй Заемне вырнаҫтарнин суми кунран кун ӳсет. Апрелӗн 21-мӗшӗнче вӑл 62.418.000 тенкӗ пулнӑ пулсан, 22-мӗшӗнче 62.841.000 тенке ҫитнӗ.

Тӑван ҫӗршывӑн патриочӗсем подписка укҫине срокченех тӳлеҫҫӗ. Апрелӗн 21-мӗшпе 22-мӗш хушшинче республикӑра подписка укҫине 868.000 тенкӗ пухнӑ. Ҫак ӗҫре Сӗнтӗр, Хӗрлӗ Чутай, Шӑхасан, Калинински, Советски, Вӑрмар районӗсенчи колхозниксем пример кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем подписка укҫине заем ҫырӑннӑ хыҫҫӑнах тӳлеҫҫӗ. Партипе совет организацисен, финанс органӗсен задачи — малта пыракансен ырӑ примерӗсене анлӑн сарасси пулать.

Заем кампанийӗ вӑхӑтӗнче облигацисем тытакансем хушшинче ӗҫлессине те манма юрамасть. Комсодсен членӗсемпе заем уполномоченнӑйӗсем халӗ выляв тухнине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑма, облигацисене тытнинчен илекен тупӑшсем ҫинчен ӗҫҫыннисене ӑнлантарса пама тивӗҫлӗ.

Подписка укҫине пухассине вӑйлатмалла

ЕТӖРНЕ. **(Телефонпа).** Районра ҫӗнӗ заема сарас ӗҫ ӑнӑҫлӑн пулса пырать. Апрелӗн 21-мӗш тӗлне пӗтӗмпе 1.944.000 тенкӗлӗх сарнӑ. Рабочисемпе служащисем, колхозниксем иртнӗ ҫултинчен чылай ирттерсе ҫырӑнаҫҫӗ. Колхозниксем заема ҫырӑннӑ вӑхӑтрах подписка укҫине те тӳлеҫҫӗ. Стрелецки ялсоветӗнчи колхозниксем заема 68.350 тенкӗлӗх ҫырӑнса—56.780 тенкӗ, Никольски ялсоветӗнчи колхозниксем 22.795 тенкӗлӗх ҫырӑнса—18.446 тенкӗ укҫине хывнӑ.

Анчах районра подписка укҫине пухас ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пырать. Чылай ялсенче ку ӗҫе тытӑнман та темелле. Пӑрҫырлан, Канаш ялӗсенче, сӗмахран, заем укҫине пӗр пус та пухман. Кунти руководительсем, комсод членӗсемпе заем уполномоченнӑйӗсем подписка ирттернипех лӑпланса ларнӑ, укҫа пухас енӗпе ӗҫлемеҫҫӗ. Калас пулать, районри партипе совет организацисем, финанс органӗсем подписка укҫине пухас ӗҫе ҫителӗксӗр ертсе пыраҫҫӗ, ҫӗнӗ заем ҫинчен, вӑл фашистла пусмӑрҫӑсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре ҫӗнтерӳ тума пулӑшни ҫинчен кашни колхознике ӑнлантарса памаҫҫӗ.

МАЛТА ПЫРАКАНСЕНЧЕН ПРИМЕР ИЛМЕЛЛЕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, апрелӗн 22-мӗш. **(Телефонпа).** Паянхи куна районра ҫӗнӗ заема 1.230.000 тенкӗлӗх сарнӑ, вӑл шутран укҫине 74,5 процент пухнӑ. Подписка укҫине пухас тӗлӗшпе уйрӑмӑнах Урхас Кушкӑ тата Кивӗ Тутайкасси ялсоветӗсем лайӑх ӗҫлерӗҫ. Вӗсем заема вырнаҫтарнӑ вӑхӑтрах укҫине те пухса ҫитерчӗҫ. Ялсовет председателӗсем—Чӑваш АССР Верховный Совет депутачӗсем С. Яковлевпа А. Иванов юлташсем колхозниксем хушшинче массӑллӑ ӑнлантару ӗҫне тӑтӑшах туса пыраҫҫӗ, ҫӗнӗ заем нимӗҫ пусмӑрҫисене пӗтерсе тӑкма пулӑшни ҫинчен ӑнлантарса пураҫҫӗ.

Утаҫкасси ялсовечӗ те (председателӗ Ятманов юлташ) заема 16.939 тенкӗлӗх сарса, укҫине ҫийӗнчех пухса пачӗ.

Энтри-Базар, Хуракасси ялсовечӗсем вара подписка укҫине пухас енӗпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Н. ВАСИЛЬЕВ.

Районри перекет кассин заведующийӗ.

Заем укҫине пухса ҫитерчӗҫ

СОВЕТСКОЕ. Районри учрежденисенче, артельсенче тата колхозсенче заем сарас ӗҫ ӑнӑҫлӑн пырать. Анат-Ачакри «Новый быт» колхозра заема 15.600 тенкӗлӗх, «Трудовик» колхозра—22.000 тенкӗлӗх, «Красное Хочашево» колхозра—15.000 тенкӗлӗх сарнӑ. Ку колхозсен председателӗсем, унти активистсем заема сарнипе пӗрлех подписка укҫине пухассишӗн те тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Подписка укҫине вӗсем виҫ-тӑватӑ кун хушшинчех пухса ҫитерчӗҫ.

М. ШВЕЦОВ.

ЗАЕМ ХРОНИКИ

СӖНТӖР. **(Хамӑр корр.).** Сӗнтӗр ялсоветӗнчи служащисем тата колхозниксем хушшинче 1942 ҫулти Военнӑй Заема пурӗ 86.470 тенкӗлӗх сарнӑ. Заем сарас тӗлӗшпе кунта Госбанкӑн районри отделенийӗн управляющийӗ Агров тата учитель-орденоносец Багров юлташсем активлӑн ӗҫлерӗҫ. Вӗсем заема сарнӑ вӑхӑтрах подписка укҫине пухас ӗҫе те туса пычӗҫ. Ҫавна май Сӗнтӗр ялсовечӗ подписка укҫине районра пуринчен малтан пухса пачӗ.

Заем укҫине тӳлес тӗлӗшпе колхозница-активисткӑсем пример кӑтартрӗҫ. Сӑмахран, Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз счетоводӗ Е. Харитонова 1.500 тенкӗлӗх, выльӑх-чӗрлӗх фермин заведующийӗ М. Быкова 1.000 тенкӗлӗх, 50 ҫулхи колхозница М. Малинова 800 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине ҫийӗнчех тӳлесе татрӗҫ.

Г. АКИМОВ.

* * *

ҪӖМӖРЛЕ. **(Хамӑр корр.).** Вӑрман хатӗрлевӗнче ӗҫлекенсем пурте Государствӑн 1942 ҫулти Военнӑй Заемне уйӑхри ӗҫукҫинчен ирттерсе ҫырӑнчӗҫ. Механик Шлямин, слесарь Телегин, шоферсем Борисов, Антонов юлташсем икӗ уйӑхри ӗҫукҫи чухлӗ, рабочи Учаев юлташ уйӑх ҫурӑри ӗҫукҫи чухлӗ ҫырӑнчӗҫ.

Заем ҫырӑнас ӗҫре килхуҫи хӗрарӑмӗсем те пысӑк активлӑх кӑтартаҫҫӗ. Князькина, Телегина, Абашина, Угодина юлташсем 150—200-шер тенкӗлӗх ҫырӑнса укҫине те панӑ.

«Комбинат» колхозра заема 116.400 тенкӗлӗх, «Молодая сила» колхозра 18.550 тенкӗлӗх сарнӑ. Ку колхозсенче подписка укҫине пухасси те лайӑх пырать. Егоркинӑри «Большевик» колхоз членӗсем заема 72.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине пӗтӗмпех тӳленӗ.

Х. ЛИСИН.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи заема «Красное Сормово» колхоз членӗсем 50.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса—30.000 тенкӗ, «Хӗрлӗ Шетмӗ» колхоз членӗсем 18.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса—16.000 тенкӗ тӳлесе татрӗҫ.

М. ГЕРАСИМОВ.

ЛАЙĂХ ӖҪЛЕКЕН СТРАХОВОЙ АГЕНТ

КАНАШ. Районри страховой инспектор Данилов юлташ Хӗрлӗ Ҫара кайсан, районри финанс пайӗ ун вырӑнне М. Малицкая юлташа уйӑрса лартрӗ. Халӗ вӑл хӑйӗн ӗҫне лайӑх туса пырать. Вӑл тӑрӑшнипе районри ӗҫҫыннисемпе колхозниксем хӑйсен пурнӑҫне, выльӑх-чӗрлӗхне тата кил-ҫурчӗсене массӑллӑн страхлаҫҫӗ. Малицкая юлташӑн 1-мӗш кварталра колхозниксен кил-ҫуртне 600 тенкӗлӗх страхламалла пулнӑ пулсан, колхозниксем хушшинче ӑнлантару ӗҫне лайӑх туса пынипе вӑл 1630 тенкӗлӗх страхланӑ.

Т. ТУРХАН.

Канаш тата Улатӑр хулисенче ВКП(б) горкомӗсем тунӑ

Ҫак кунсенче Канаш тата Улатӑр хулисенче парти членӗсен районри тата хулари пухӑвӗсем пулса иртнӗ. РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх ҫак хуласене республикӑна пӑхӑнса тӑракан хуласем туса уйӑрнӑ май, вӑл хуласенчи парти членӗсен пухӑвӗсенче ВКП(б) хула Комитечӗсене суйланӑ.

Пухусем хыҫҫӑн хула комитечӗсемпе райкомсен пленумӗсем пулса иртрӗҫ.

Канаш хула комитечӗн пленумӗ ВКП(б) горкомӗн пӗрремӗш секретарӗ пулма М. И. Репкин юлташа, иккӗмӗш секретарӗ пулма Н. Н. Никитин юлташа, кадрсем енӗпе ӗҫлекен секретарӗ пулма А. Д. Данилов юлташа суйларӗ.

ВКП(б) Улатӑр хула комитечӗн пӗрремӗш секретарӗ пулма партин Улатӑр горкомӗн пленумӗ Л. И. Красильников юлташа, иккӗмӗш секретарӗ пулма Н. И. Горбунов юлташа, кадрсем енӗпе ӗҫлекен секретарӗ пулма А. В. Степанова юлташа суйларӗ.

ВКП(б) Канаш райкомӗн пленумӗ парти райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ пулма А. М. Добродушев юлташа, иккӗмӗш секретарӗ пулма Ф. А. Антонов юлташа, кадрсем енӗпе ӗҫлекен секретарӗ пулма Л. П. Знаменская юлташа ҫирӗплетрӗ.

ВКП(б) Улатӑр райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ пулма А. И. Киреев юлташа, иккӗмӗш секретарӗ пулма Н. И. Поверенов юлташа, кадрсем енӗпе ӗҫлекен секретарӗ пулма М. Г. Белоглазов юлташа суйланӑ.

Канаш хулинчи тата районӗнчи парти членӗсен пухӑвӗсенче, ҫав райкомпа горком пленумӗсенче ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ пулчӗ, Улатӑр хулинчи тата районӗнчи пухусенче, Горкомпа райком пленумӗсенче ВКП(б) Обкомӗн кадрсем енӗпе ӗҫлекен секретарӗ Никитин юлташ пулнӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Апрелӗн 21-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Апрелӗн 21-мӗшӗнче фронтра нимӗнле паллӑ улшӑнусемех те пулман.

Апрелӗн 20-мӗшӗнче нимӗҫсен 31 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 11 самолет пӗтнӗ.

* * *

Апрелӗн 20-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем нимӗҫсен 4 бронемашинине, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине, 26 полевой тата зенитнӑй орудине, 15 минометне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пехотине 3 ротӑна ҫити саппаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин фрончӗн уйрӑм участокӗсенче пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1000 ҫынна ҫити, тӑшманӑн 9 танкне, 7 орудине, пулеметсен 40 точкине, 4 дзотне, минометсен батарейине, 10 блиндажне, унти пехотӑпа пӗрлех, пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассем хунӑ 3 склада сирпӗнтерсе янӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫ войскисен тылӗнче кӗрешекен пирӗн часть (Хӗвеланӑҫ фрончӗ) халӑх пурӑнакан пунктсенчен пӗринче гитлеровецсен гарнизонне атакӑланӑ. Хаяр ҫапӑҫура противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 300 ҫынна ытла вӗлернӗ, 600 ҫынна ҫити амантнӑ, ҫакӑн хыҫҫӑн нимӗҫсен чакма тивнӗ. Пирӗн боецсем противникӑнне 6 пулемет, винтовкӑсемпе автоматсем нумай, 4 радиостанци, продовольствипе фураж хунӑ 3 склад, 129 лаша, 400 лав тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗ тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Гвардеецсем Сафаев, Булатов, Солоцев, И. Ф. Пономарев, Демидов, И. М. Пономарев юлташсем пӑшалсемпе пулеметсенчен персе противникӑн 2 бомбардировщикне ӳкернӗ.

* * *

Отделени командирӗ Агмуралиев противникӑн тылне кӗрсе кайнӑ та ҫул хӗррине пытанса ларнӑ. Часах ҫул ҫинче 6 лав курӑнса кайнӑ. Агмуралиев нимӗҫсене ҫывӑха янӑ та, тӳрремӗн персе, 6 салтака вӗлернӗ. Каҫхине хӑюллӑ командир ҫав 6 лава, унти полевой почтӑпа, укҫа-тенкӗпе тата документсемпе пӗрлех хамӑрӑн чаҫа илсе пынӑ.

* * *

Румынсен 2-мӗш дивизийӗн 1-мӗш полкӗнчи 10-мӗш ротӑн тыткӑна лекнӗ командирӗ капитан Раду Маштян ҫапла каласа панӑ: «Румыни войскисем ҫавтери пысӑк ҫухатусем тӳсрӗҫ. Пирӗн полк кӗске вӑхӑт хушшинчех 1000 салтак ҫухатрӗ. Румынсен салтакӗсемпе офицерӗсем ҫапла калаҫҫӗ: пит вӑрҫасах тесессӗн пирӗн Венгрие хирӗҫ вӑрҫмалла, венгерсем туртса илнӗ Трансильвани пайне каялла тытса илмелле. Кировоградпа Ново-Урюпинӑра Румынипе Венгри чаҫӗсем хушшинче юнлӑ ҫапӑҫусемех пулнӑ.

Румынире нимӗҫсене тарӑхни ӳссе хӑватланса пырать. Нимӗҫсен войскисем Румынире никам чӗнмесӗр хӑнасем пек пырса кӗчӗҫ те Румыние сӑвакан ӗне вырӑнне туса хучӗҫ. Нимӗҫсем румынсенчен мӑшкӑллаҫҫӗ, вӗсем румынсене начар раса представителӗсем тесе шутлаҫҫӗ. Нимӗҫсем Румынирен Германие темӗн чухлӗ тырӑ, аш-какай тата нефть турттарса илсе кайрӗҫ, ҫав вӑхӑтрах Румыни халӑхӗ выҫӑпа вилет. Румынсен ҫакӑн пек пословица пур: ҫӗҫӗ шӑмма ҫитиччен кӗрсе кайсан, малалла текех тӳсме ҫук. Темӗн тӗрлӗ нуша тӳссе асапланса пӗтнӗ Румыни халӑхӗ ҫав тӗле ҫитсе пырать, текех вӑл ҫак вӑрҫа пуҫласа янӑ Антонеску правительствине чӑтса тӑраймӗ».

* * *

Норвегире Гитлер ҫарӗнчен тарса кайнӑ нимӗҫ салтакӗсем пытанса пурӑнаҫҫӗ. Нумаях пулмасть, дезертирсем Нарвикран инҫех мар нимӗҫсен пӗр пысӑк продовольстви склачӗ ҫине пырса тапӑннӑ. Склада хуралласа 12 салтакпа унтер-офицерсем вӗсене хирӗҫ тӑман. Нимӗҫсен Норвегири влаҫӗсем вырӑнти халӑха дезертирсем ӑҫта пурӑннине кӑтартса парсан нумай укҫа тӳлеме пулаҫҫӗ. Анчах та норвежецсен пӗр ҫынни те Гитлер ҫарӗнчен тарнӑ салтаксене кӑтартса памасть.

* * *

Уралри Н-ски заводра ӗҫлекен конструктор Ханин инженер детальсене пӗр чарӑнса тӑмасӑр касса тӑмашкӑн оригиналлӑ приспособлени тунӑ. Ҫав приспособленипе усӑ курса, фрезеровщикӑн ученикӗ те пӗр сменӑра 26 деталь вырӑнне 600 деталь туса кӑларма пуҫларӗ. Конструкторӑн ҫав изобретенийӗпе 41 тӗслӗ деталь тунӑ чухне усӑ курма пулать. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ҫав детальсене тунӑ ҫӗрте 800—2000 процент ӳсет.

Апрелӗн 22-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Апрелӗн 22-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра нимӗнле паллӑ улшӑнусемех те пулман.

* * *

Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнче нимӗҫ авиацийӗ пысӑк ҫухатусем тӳсет. Мартӑн 22-мӗшӗнчен пуҫласа апрелӗн 18-мӗшне ҫитиччен гитлеровецсем 891 самолет ҫухатнӑ. Вӗсенчен пӗрремӗш эрнере — мартӑн 22-мӗшпе 28-мӗш хушшинче — нимӗҫсем 161 самолет, иккӗмӗш эрнере — мартӑн 29-мӗшпе апрелӗн 4-мӗш хушшинче — 296 самолет, виҫҫӗмӗш эрнере — апрелӗн 5-мӗшпе 11-мӗш хушшинче — 322 самолет, тӑваттӑмӗш эрнере — апрелӗн 12-мӗшпе 18-мӗш хушшинче — 112 самолет ҫухатнӑ.

Ҫав вӑхӑт хушшинчех пирӗн 239 самолет пӗтнӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 100 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ тата 3 пулемет, винтовкӑсемпе автоматсем нумай тытса илнӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче пирӗн чаҫсем, противник хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, оборона тумалли питех те кирлӗ рубежа йышӑнса илнӗ. Нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсем 150 ҫынна яхӑн вилсе пӗтнӗ. Артиллерипе минометсенчен персе 3 дзота ҫӗмӗрнӗ, 12 пулемет, 3 миномет, 2 автомашина тата 50 лавран тӑракан обоза пӗтерсе тӑкнӑ. Зенитнӑй пулеметран персе, ҫапӑҫу хирӗ тӗлӗнче нимӗҫсен «Ю-88» йышши бомбардировщикне ӳкернӗ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче, К. ялӗн районӗнче, противник темиҫе хутчен контратака тума хӑтланнӑ. Пирӗн боецсем, нимӗҫсене сирпӗтсе пӑрахса, вӗсене пысӑк сиен кӳнӗ. Халӑх пурӑнакан пункт патне пымалли вырӑнсенче кӑна тӑшманӑн 465 вилли выртса юлнӑ. Тыткӑна илнисем пур. Автоматсемпе винтовкӑсем тата боеприпассем тытса илнӗ. Пӑшалсемпе пулеметсенчен персе, противникӑн 2 транспортнӑй самолетне ӳкернӗ.

* * *

Агапов лейтенант командир пулса ертсе пыракан танк гитлеровецсене пысӑк сиен кӳнӗ. Пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче танк экипажӗ тӑшманӑн 3 дзотне ҫӗмӗрнӗ тата нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 100 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сапернӑй батальонри красноармеец Кузнецов юлташ икӗ кун хушшинче нимӗҫсен 512 противотанковӑй минине сиенсӗрлетнӗ.

* * *

Нимӗҫсен 97-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 204-мӗш полкӗнчи пӗрремӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Леопольд Копитлански ҫапла каласа панӑ: «Юлашки ҫапӑҫусенче пирӗн полк питӗ пысӑк ҫухатусем тӳсрӗ. Пӗрремӗш ротӑра — 25 ҫын, иккӗмӗш ротӑра вара 12 ҫын кӑна тӑрса юлчӗ. Командовани халӗ мӗнпур хуҫалӑхри персонала тата строя юрӑхсӑр ҫынсене ҫапӑҫӑва хӑваласа кӗртет. Салтаксем хӑйсем ӑссӑр вилес шӑпа умӗнче тӑратпӑр тесе шутлаҫҫӗ».

* * *

Нимӗҫсен вилнӗ унтер-офицерӗ Вилли Кюндер ҫумӗнче хӑйӗн арӑмӗ Эльза янӑ ҫырӑва тупнӑ. Вӑл ҫапла ҫырать: «Сана, манӑн Вилли, ирсӗррӗн улталарӗҫ, эсӗ, сире малтан каланӑ пек, Францие кайман иккен, ҫав хӑрушӑ Российӑна лекнӗ. Ҫакӑ вӑл питех те хӑрушӑ! Эсӗ шикленсе кӗтни пулса тӑчӗ. Пирӗн патра ӗнер Гертруда инке пулчӗ. Пӗр аманнӑ офицер ӑна пирӗн салтаксем Российӑра тифпа чирлени ҫинчен, вӗсем унта питех те начар тӑранса пурӑнни ҫинчен тата пӗтӗмпех пӗтсе халран кайни ҫинчен каласа панӑ. Асӑрхануллӑрах пул, хӑрушӑ ҫӗре пуҫна ан чик. Ҫава патне кайса кӗччӗр наградӑсемпе хӗрессем, киле чӗррӗн таврӑнмалла пултӑрччӗ кӑна. Ҫак ылханлӑ вӑрҫӑ мӗнтери йӑлӑхтарса ҫитерчӗ ӗнтӗ! Пирӗн кӳршӗ Леонгард Российӑра вилни ҫинчен эсӗ пӗлместӗн пулӗ-ха. Ҫавӑн пекех тата Август Дучинц та вилнӗ. Пауль Шмиттольд Варшавӑри госпитальрен ҫыру янӑ — унӑн икӗ урине те мина татса кайнӑ. Ҫавӑн пекех тата Эрих Штарт та, Иозеф Крайнц та, Иоганн Берг та аманнӑ. Темӗнле хӑрушӑ пурнӑҫ. Урӑх тӳсме хал ҫук. Мӗне кура эпир ҫакнашкал инкек-синкексем тӳсет пӗр-ха?»

* * *

Ленинград облаҫӗнчи Стренек ялӗнче гитлерла ирсӗрсем колхозниксене пӗр ушкӑн суйласа илнӗ те вӗсенне медицина норми хушшинчен чылай нумайрах юн илнӗ, кайран вара ялти ытти ҫынсен куҫ умӗнче персе пӑрахнӑ.

* * *

Шатраллӑ тифпа тата вар-хырӑм тифӗпе нимӗҫ салтакӗсем питӗ нумайӑн чирлеме пуҫланине пула Воцлавик, Торн, Гнезин тата Польшӑн ытти хулисенче гитлеровецсем нумай ҫуртсенчен вӗсенче пурӑнакан ҫынсене хӑвала-хӑвала кӑларнӑ та чирлӗ салтаксене вырнаҫтарса тухнӑ. Медицина тӗлӗшпе пулӑшу ҫук пирки чирлисем ҫавтери нумайӑн вилеҫҫӗ. Польша хулисенче пурӑнакансем нумайӗшӗсем госпитальсенче вилекен нимӗҫ салтакӗсем валли кулленхи кун шӑтӑксем чаваҫҫӗ.

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче

ХУРА ТИНЕС ÇИНЧИ ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ. **Укерчĕк çинче:** крейсер, боевой задани илнĕ хыççăн, çула тухма хатĕрленет.

А. МЕЖУЕВПА Е. ХАЛДЕЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Фронт линийĕн лешьенче

КАНТАР ФРОНЧĔ. (ТАСС спецкорĕ). Вĕсем фронт линийĕ урлă хăйсем çеç пĕлекен çулсемпе пыраççĕ. Тăшманăн тискер кайăкла йăвисем урлă иртсе пынă чухне пурнăç çинчен сахал шухăшлатăн. Ун чухне хăвăн вилĕмне кашни минутăрах кĕтмелле. Анчах та çуратнă çĕршыва юратни вилĕм хăрушлăхĕнчен вăйлăрах. Акă ĕнтĕ, тăшман тылĕнчи хыпарсене илсе килекен çынсем хамăрăннисем хушшинче. Таганрог хулинчен килнĕ Д. юлташ хулари тата ялти çынсем ылханлă тăшмана хирĕç геройла чăтăмлăхпа кĕрешни çинчен каласа парать.

— 6 уйăх хушши,—каласа парать Д. юлташ,—нимĕç захватчикĕсем пирĕн Таганрог хулинче хуçаланаççĕ, вырăс халăхĕшĕн мĕн хаклă, çавна пурне те пĕтереççĕ...

Хулара тата ялсенче совет çыннисем пур майсемпе те, пур тĕрлĕ вăхăтпа та усă курса кĕрешĕве малалла туса пыраççĕ. Нумаях пулмасть, Таганрогри бургомистрат çуртне уменчи юпа çине хут çыпăçтарса хунă. Çав хут çине шултра саспаллисемпе çапла çырнă: «Нимĕç, тухса кай, унсăрăн сана начар пулать».

Совет çыннисем—Таганрогра пурăнакансемпе çывăхри ялсенчи çынсем, гитлеровецсем вĕсене хирĕç тем тĕрлĕ тискеррĕн кĕрешеççĕ пулин те, хăйсен курайманлăхне захватчиксене хирĕç тăратма кашни май килнĕ вăхăтпах усă кураççĕ. Нумаях пулмасть нимĕçсем Таганрогри театрта концерт пама шут тытнă. Алăксем çине «Нимĕçсене çеç кĕртеççĕ»—тесе çырса çапнă. Концерта пуçлама май килмен. Курма пынисем тухăнса çитсен, залри çутта сÿнтерсе лартнă та пăшал пенисем янрама пуçланă. Шав, хускану пуçланнă. Зала урăх никама та кĕртмен. Гестаповецсем документсем тĕрĕслеме, ухтарма пуçланă, анчах çав гитлеровецсен савăнăçне пăсакан чăрсăр çынна тупма май килмен.

— Эпĕ хамăр çывăхри ялсенче çÿресе куртнă, — малалла каласа парать Д. юлташ.—Эпĕ нумай çын куртнă. Вĕсен чĕрисем гитлерла йытăкĕтĕвĕсене туртса çурас килнипе тапаççĕ.. Б. хуторĕнче хресчен хĕрарăмĕсем фашистсен комендатури вырнаçнă суртăн чÿречисене пĕтĕмпех çапса çĕмĕрсе пĕтернĕ. Салтаксем пăшалсенчен пеме пуçланă, хăшпĕр хĕрарăмсене вĕлернĕ те. Анчах гитлеровецсем тискерле хăтланни ыттисене чарайман. Хĕрарăмсем комендант хваттерĕ патне пуçтаранна. «Пурне те персе вĕлерсе пĕтерейместĕр, эпир хамăр чĕрĕ чухне пирĕн хуторта нимĕçсем хуçа пулаймĕç», тесе кăшкăрнă вĕсем.

Пирĕн çĕршывăн тăшмана курайманлăхне пĕтерме çук. Тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ çĕр çинче пурăнакан совет çыннисем пÿтсĕр оккупантсене тĕппипех пĕтермелли сехете çеç кĕтеççĕ.

В. ХОДАКОВ.

МОПР организацийĕ активлăн ĕçлет

ОКТЯБРЬСКОЕ. Карапаш ялсоветне кĕрекен виçĕ колхозра та аманнă боецсем валли тата МОПР ячĕпе тăвакан танксен колонни валли укçа-тенкĕ пухасси сарăлсах пырать.

Анатри Карапаш промартель çумĕнчи МОПР организацийĕн членĕсем Париж Коммунипе МОПР çинчен доклад итленĕ хыççăн колхозниксем хушшинче 100 тенкĕ ытла укçа пухса пачĕç. МОПР членĕсем хăйсен çулталăкри член укçине пурте пекех парса татнă. МОПР организацийĕн бюро председателĕ В. Федоров, ĕçре ывăнма пĕлмен ватă çын, «Волгарь» колхозра МОПР ыйтăвĕпе час-часах калаçусем туса ирттерет. Çавăнпа членсен йышĕ ÿссех пырать.

Тури Карапашра тата Пÿнемĕчре те аманнă боецсене пулăшма тата танк колонни тума чылай укçа пухнă.

П. МАЙОРКИН.

Колхозниксем партипе правительство решенине ырлаççĕ

150-шар ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлеме сăмах паратпăр

ÇĔМЕРЛЕ, апрелĕн 22-мĕш. (Хамăр корр., телефонпа). ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен» йышăннă постановление районри колхозниксемпе колхозницăсем ырлаççĕ.

Енер Анат Кăмашри «Красный пахарь» колхозра колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура партипе правительствăн постановленине сÿтсе-явса хĕрÿллĕн ырларĕç.

— Халĕ, çĕршывра отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра, кашни колхозникĕн, колхозницăн хăйĕн пĕтĕм вăйне вăйлă тырпул туса илес ĕçе памалла. Иртнĕ çул пирĕн хăшпĕр колхозницăсем ĕçе кашни кун тухса тăрăшса ĕçлеймен. Кăçал çавăн пек ĕçлени кирлĕ мар. Тăрăшса ĕçлесен эпир кашниех 300-шер ĕçкунĕнчен кая мар тума пултаратпăр,—терĕ шутура Д. Сыбатова колхозница.

Пухăва пухăннă колхозниксемпе колхозницăсем партипе правительствăн постановленине ырласа, кашниех кăçал 150 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе тума пулчĕç. Колхозницăсем правление ачасен яслине уçма хушрĕç.

Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕç. Партипе правительствăн постановленине ырласа, колхозницăсем кăçалхи çуракине чи кĕске срокра туса ирттерме сăмах параççĕ.

Колхозăн 6-мĕш бригади иртнĕ çул тырпулсен тухăçне планпа пăхнинчен чылай ÿстерчĕ. Вăтам шутпа кашни гектартан ыраш 19,8-шер центнер, сĕлĕ 16,3-шер центнер туса илнĕ. Бригада ĕçшĕн хупса тÿлемелли йĕркепе нумай тырпул илчĕ. Надежда Фадеева колхозница, 230 ĕçкунĕ туса, ĕçшĕн хупса тÿлемелли йĕркепе 158 килограмм ыраш, 50 килограмм тулă, 52 килограмм сĕлĕ илчĕ. Кăçал татах пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме пулаççĕ колхозницăсем.

Клевер акаççĕ

СЕНТЕР. Кăпас ялсоветĕнчи «Комбайн» колхоз, юр кайса пĕтнĕ участоксене суйласа илсе, клевер акма шуçларĕ. Апрелĕн 21-мĕшĕнче колхоз 7,5 гектар çине акса хăварчĕ.

С. НАЛИМОВ.

Клевер вăрлăхне хатĕрлес ĕç начар пырать

СЕНТЕРВĂРРИ. (Телефонпа). Районри малта пыракан колхозсем клевер акма тытăнчĕç. Анаткассинчи «Майăн 1-мĕш» колхоз çак иртнĕ кунсенче 3 гектар çурă çĕр çине клевер акнă. Хирсем юр сийĕнчен шуçанса пынă май колхоз клевера татах акать.

Клевера массăллăн акас вăхăт çитсе килет. Анчах çак ĕçе вăхăтра туса иртерме районри чылай колхозсен клевер вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Лапра Макаçри «Октябрь» колхозăн клевер вăрлăхĕ пачах та çук. Çапла пулсан та, колхоз председателĕ Ильинский юлташ 9 гектар çинчен вырса купаланă вăрлăхлăх клевера турттарса кĕрсе типĕтсе шĕкĕлчес ĕçе организацилемен. Çавăн пекех Тури Макаçри «Малалла», Урай Макаçри «14 лет Чувашии» тата «17-й Партсъезд», «Власть труда» колхозсенче те клевер вăрлăхĕ акма çитмест. Колхоз руководителĕсен тимсĕрлĕхне пула иртнĕ çулта ăнăçлăн пулнă клевера уйран турттарса кĕрес ĕçе ку колхозсем халĕ те тытăнман.

Клевер вăрлăхне хатĕрлесси çинчен районра пĕрре çеç мар калаçнă, постановленисем йышăннă. Анчах районри организацисем, вăл шутра райçĕрĕç пайĕпе унăн агрономĕсем те, колхозсене тухса çак ĕçе вырăнтан хускатас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Планпа пăхнă клевера хăйĕн вăхăтĕнче акса хăвармалла.

А. РАЗИН.

ÇĔРУЛМИ ВĂРЛĂХНЕ ЯРОВИЗАЦИЛЕÇÇĔ

СЕНТЕРВĂРРИ. Анаткассинчи «Майăн 1-мĕш», Кукашнинчи «Наркомюст», Паникассинчи «Шордан» колхозсем çĕрулми вăрлăхĕсене яровизацилеме тытăннă. Çĕрулми вăрлăхне яровизацилес ĕçе яровизаторсен кĕске срокла курсĕсенчен вĕренсе тухнă колхозниксем ертсе пыраççĕ.

Çĕрулми вăрлăхне яровизацилеме вăхăт ĕнтĕ. Яровизацилесе лартнă çĕрулми тухăçларах тата иртерех пулса çитни пур колхозниксемшĕн те паллă. Çапла пулсан та, хăшпĕр колхозсем ку ĕçе тума васкамаççĕ-ха. Водолеевăри Чапаев ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Моряков юлташ), Ермошкăри «Знамя революции» колхозра (председателĕ Крупнов юлташ) çĕрулми вăрлăхне яровизацилеме халĕ те тытăнман.

Ку çеç те мар. Çак колхозсенче çĕрулми вăрлăхĕ планпа пăхнă çĕр лаптăкĕ çине лартма çитмест. Çапла пулсан та, колхоз председателĕсем çĕрулми вăрлăхне кÿршĕри колхозсенчен улăштарса илме тăрăшмаççĕ, вăрлăха райçĕрĕç пайĕ тупса парасси çине шанса лараççĕ.

А. Р.

ЛАШАСЕНЕ НАЧАР ПĂХНĂ ÇĔРТЕ

Часах çуракине тухмалла. Кашни лаша ĕçре кирлĕ пулать. Вĕсене халĕ уйăрăмах лайăх пăхса, ĕçе тухма вăй хуштармалла. Анчах та хăшпĕр колхозсенче лашасене ытла та чунсăрăн пăхаççĕ. Час-часах кирлĕ-кирлĕ мар çĕре кÿлсе тухса ывăнтараççĕ. «Коминтерн», «Красный часовой» колхозсенче лашасене çула кÿлсе тухсан апат памаççĕ, шăвармаççĕ, хĕнесе çуранлатаççĕ. «Ново-Чурино» колхозра М. Кутузов лашапа çула кайнă чух фураж илнĕ. Анчах та лашана çитерес 20 килограмм фуража вăл хăйĕн килне илсе кĕнĕ, лашана апатсăрах ĕçлеттернĕ.

«Новая волна», «КИМ» колхозсенче лашасем çине чăн та чунсăрăн пăхаççĕ. Унта лашасем вилни те пулкаланă.

Елчĕк районĕнчи колхозсенче çакăн пек киревсĕр тĕслĕхсем пур пулсан та, райçĕрĕç пайĕн руководителĕсем вĕсене вырăна тухса тĕрĕслемеççĕ, айăплă çынсене тивĕçлĕн ответ тыттармаççĕ. Çапла, «Новая волна» колхозри 2 лашана вĕлерекенсене халĕ те ответ тыттарман.

В. ЕРТМАКОВ.

Шкул ачисене ялхуçалăх ĕçне явăçтарассишĕн

Пирĕн шкул ачисем те, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, патриотла хĕрÿллĕ шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ. Нимĕçсен фашистла бандичĕсене хăвăртрах аркатса тăкасчĕ тесе, пирĕн шкул ачисем геройла Хĕрлĕ Çара мĕнпе те пулин пулăшма, тăван çĕршыв умĕнче пархатарлă ĕçсем тума тăрăшаççĕ.

Иртнĕ çулла тата кĕркунне Чăваш республикинчи шкулсенче вĕренекенсемпе учительсем, колхоз уйĕсенче пикенсе ĕçлесе, колхозсене нумай пулăшу пачĕç. Ишлей районĕнчи шкул ачисем пĕр тырă вырнă вăхăтра кăна 10.500 ĕçкунĕ тунă, Советски районри вĕренекенсем 5.258 ĕçкунĕ, Кувакино районĕнчи вĕренекенсем 5.694 ĕçкунĕ тунă; çавăн пекех шкулсен вăйĕпе Улатăр районĕнче 400 гектар, Элĕк районĕнче—186 гектар, Çĕрпÿ районĕнче—176 гектар тырă вырса пуçтарнă т. ыт. те. Ĕçкунĕсемшĕн илнĕ тупăша шкулсем çĕршыв оборонин фондне панă.

Çак султан пуçласа вăтам шкулсен аслă класĕсенче вĕренекенсене ялхуçалăх ĕçĕсемпе паллаштарса пычĕç. Шкул ачисене ялхуçалăх ĕçне вĕрентесси государство ĕçĕ пулса тăчĕ. Ачасене вĕрентме шкулсене çĕрĕçĕпе ялхуçалăх машинисене лайăх пĕлекен специалистсене: агрономсене, ăста тракторристсемпе комбайнерсене т. ыт. те чĕнмелле. Вăтам шкулсем çумĕнче ялхуçалăх ĕçĕсен теорипе практикине вĕренме уйрăм лабораторисем тумалла, кабинетсем уçмалла, пăхса вĕренмелли пособисем туянмалла. Шкулсен çитес çуракинчен пуçласа ялхуçалăх ĕçĕсене татах ытларах хутшăнмалла пулать. Ялхуçалăхĕнче вĕсен çу каçипех ĕçлеме тÿрĕ килет. Малта пыракан шкулсем çак тĕлĕшпе пикенсех ĕçлеме тытăннă ĕнтĕ. Елчĕк районĕнчи шкулсем вăрлăх нумай сортланă. Вĕсем кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, уйсене тислĕк турттарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, ялхуçалăх машинисен запаслă чаçĕсене пухаççĕ т. ыт. те.

Çак вăхăтра аслă классенче вĕренекенсене уй ĕçĕнче, анкартинче, пахчасенче ĕçлеме кирлĕ япаласене (кĕреплесем, сÿресем тата ыт. те) тума вĕрентни те питĕ усăллă пулĕччĕ. Шкулсем çумĕнче сăнавлă çĕрĕç участокĕсем тумалла. Çав участоксенче шкул ачисем, ăста агрономсем ертсе пынипе, тĕрлĕрен пахча-çимĕç тума вĕренччĕр. Çакăнпа пĕрлех ачасене юман çинче пурçăн тăвакан хуртсене ĕрчетме те вĕрентмелле.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕреннипе пĕрлех, ачасем общеобразовательнăй предметсене вĕренессине те аякалла пăрса хăвармалла мар. Общеобразовательнăй енĕпе вĕренесси халичченхи пекех йĕркеллĕн те тĕплĕн пулса пымалла. Ачасен вĕренĕвĕ педагогика науки паракан кăтартусенчен пăрăнма тивĕçлĕ мар.

Шкул ачисем колхозсенчи агитациллĕ ĕçре те пысăк пулăшу пама пултараççĕ: уйри ĕçсем хушшинчех вĕсем стена хаçачĕсем кăларма, хаçатсем вуласа пама пултараççĕ. Аслă классенче вĕренекенсен, уйрăмăнах хĕрачасен, ача-пăча яслисенче тата ача площадкисенче ĕçлемелле. Çитес çулла колхозсенче ача яслисемпе площадкăсене нумайрах уçмалла пулать.

Ачасене ялхуçалăхĕнче ĕçлеме хатĕрлес тĕлĕшпе шкулсен пикенерех ĕçлемелле. Çак йывăр вăхăтра кашни шкул ачин нумай ĕç вăйĕ ыйтакан ялхуçалăхĕшĕн усăллă пулма тăрăшмалла.

Н. СТЕПАНОВ.

Америка авиацийĕ Япони хулисем çине тапăнни çинчен

НЬЮ-ИОРК, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). «Колумбия» ятлă радиовещани компанийĕ çапла хыпар парать. Токиори радио пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 18-мĕшĕнче Япони хулисем çине американецсен «Б—25» йышши самолечĕсем—вунă самолета яхăн вĕçсе пынă. Вĕсенчен пĕр самолечĕ çĕр çине анса ларма пулнă. Анса ларнă самолетăн 5 çынран тăракан экипажĕ тыткăна лекнĕ. Токиори радио тата çакна пĕлтернĕ: Америка бомбардировщикĕсем Япони çине вĕçсе пынă кунах японецсем хăйсен çыранĕсем çывăхĕнче Америка авианосецĕсем пуррине асăрханă, вĕсем хăйсене курсанах каялла ишсе кайнă. Япони çине вĕçсе пынă Америка самолечĕсенчен хăшпĕрисем Китай еннелле вĕçсе кайнă. Токиори радио ĕнентерпĕ тăрăх, Америка самолечĕсем Япони хулисене пысăк сиен кÿреймен, тесе пĕлтерет «Колумбия» радиовещанийĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен командованийĕн аллинче Америка самолечĕсем Япони хулисем çине тапăнни çинчен калакан нимĕнле хыпарсем те çук, çавăнпа та унта Америкăн тинĕссенче çÿрекен авианосецсем çинчи самолечĕсем пырса тапăннă тенине ĕненме пулать. Паллах, авианосецсем тăшманăн территорийĕ çинче пулнă вăхăтра, карапсем хушшинче пĕр-пĕрне радио тăрăх калаçма май килмен. Америка самолечĕсем вĕçсе пырса тапăнни çинчен Японипе Германири радиостанцисем нумай пĕлтерÿсем панă. Çав пĕлтерÿсем тăрăх, Америка самолечĕсем сывлăшран тапăнасси апрелĕн 8-мĕшĕнче кăнтăрла иртнĕ хыççăнах пуçланнă, çак тапăнура Токиопа Иокогама хулисем çине 60 самолет ытла вĕçсе пынă. Çакă икĕ хула таврашне, промышленность предприятийĕсем пиншерĕнех шутланакан вырăнсене, нумай бомба пăрахнă. Тепĕр икĕ сехете яхăн иртсен, Америка самолечĕсем Кобе портĕ çине тата индустриллĕ Нагоя хули çине вĕçсе пырса тапăннă. Японецсем хăйсем каланă тăрăхах, бомбăсем пăрахнипе хăшпĕр сиенсем пулнă. Вут хыптаракан бомбăсем нумай пăрахнипе Нагойăра тата Кобере пушарсем пуçланнă. Телефон-телеграф çыхăнăвĕ татăлнă. Токиора чылай промышленноçлă предприятисем çуннă. Токио хулинче апрелĕн 19-мĕшĕнче ирхине каллех сывлăшран тапăннине систерекен тревога пулса иртнĕ. Çав кунхинех, кăнтăрла, пĕтĕм Японин вăтаçĕрĕсенче тревога туса ирттернĕ.

ЯПОНИ ФЛОЧĔН ÇУХАТĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН АМЕРИКА ПĔЛТЕРНИСЕМ

НЬЮ-ИОРК, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Америкăри радиостанцисем ĕнер Америкăн тинĕс-çар тата сывлăш çар вăйĕсем Лăпкă океан çинче декабрĕн 7-мĕшĕпе апрелĕн 16-мĕш хушшинче Японин карапĕсене хирĕç тунă операцисен результачĕсем çинчен пĕлтернĕ; радиостанцисем çав сведенисене Вашингтонри паллă çар çыннисенчен илнĕ. Асăннă вăхăт хушшинче японецсен 25 çар карапне пĕтерсе тăкнă, транспорт суднисене, танкерĕсене, груз тиемелли тата ытти тĕрлĕ суднисене 55-шне пĕтернĕ. Кунсăр пуçне тата Америка флочĕпе авиаци японецсен 16 çар карапне, ытти тĕрлĕ 40 суднине пĕтерсе тăкнă теме те сăлтав пур.

Японецсен 43 çар карапне, ытти тĕрлĕ 35 суднине сиенленĕ. Çав хисепе Англи, Австрали тата Голланди войскисем японецсене кÿнĕ çухатусене кĕртмен.

Хэлл заявленийĕ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл, февраль пуçламăшĕнче сывлăх начар пирки Вашингтонран кайнăскер, халĕ таврăнса каллех хăйĕн ĕçĕсене тума тытăннă.

Хэлл хаçат представителĕсене йышăнса çапла каласа панă: Пĕрлешÿллĕ Штатсем юлашки уйăхсенче вăрçă тĕлĕшпе тунă паллă çитĕнÿсене, уйрăмăнах вăрçă фрончĕсем валли материалсем туса кăларас енĕпе тунă çитĕнÿсене эпĕ тимлĕн асăрхаса тăтăм, çав çитĕнÿсем ман кăмăла çырлахтараççĕ, тенĕ. Хэлл каланă тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен хальхи вăхăтра вăрçă материалĕсем туса кăларасси çак çул пуçламăшĕнче шутласа хунинчен нумай мала иртсе кайнă. Вăрçăра çĕнтересси çинчен сăмах хускатсан, Хэлл çапла каланă: Пĕрлешÿллĕ Штатсенче, çавăн пекех тата çак вăрçăра пĕрлешнĕ ытти государствăсенче те мĕнпур этемлĕх историйĕнчи чи варварла лидерсен чи хăрушла шухăшĕсене, вĕсем пĕтĕм тĕнчене пăхăнтарса мĕнпур халăхсене тискер террорпа чуралантарма шутланине кашни арçын, кашни хĕрарăм мĕн чухлĕ хăвăртрах ăнланса илĕ, çавăн чухлĕ хăвăртрах çĕнтерÿ тума пулĕ, хăвăртрах çĕнтерсен—çын та, пурлăх таврашĕ те сахалтарах пĕтĕ. Эпĕ шансах тăратăп,—тенĕ юлашкинчен Хэлл,—пирĕн халăх, çавăн пекех пирĕнпе союзлă ытти халăхсем те, «ырана кĕтмесĕр, паян çĕнтерсе пымалла», текен лозунга çеç тытса пырĕç. Çĕнтерÿ енне çакăн пек ĕненÿпе пырсан, пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕ халăхсем варварла тискер вăйсене тĕппипех çĕнтерĕç.

Голланди Индийĕнчи партизанла кĕрешÿ

НЬЮ-ИОРК, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Мельбурнран пĕлтернĕ тăрăх, Австралие пĕчĕк кимĕсемпе Ява утравĕ çинчи партизансен отрячĕ пынă. Отряд японецсен тинĕс çинчи блокадине татса каçнă. Партизансем çар çыннисен тумтирне тăхăннă, хĕçпăшалсемпе.

Анет агентствин корреспонденчĕ Мельбурнран пĕлтернĕ тăрăх, Голланди Индийĕн уполномоченнăйĕ çапла каланă: Голланди Индийĕн хĕçпăшаллă çарĕ çаплах-ха кĕрешет, ăна генерал-майор Шиллинг ертсе пырать, тенĕ. Вăл тата Голланди летчикĕсен Ява çинче кĕрешнĕ групппи хальхи вăхăтра Австралире тăни çинчен, унта летчиксем Америка самолечĕсемпе вĕçме вĕренни çинчен каласа панă.

Нимĕç йытă-рыцарĕсене аркатса тăкни 700 çул тултарнă ятпа Нью-Йоркра митинг пулса иртнĕ

НЬЮ-ИОРК, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче вырăссен обществăллă организацийĕсем тăрăшнипе — «Совет Союзне медицина пулăшăвĕ паракан комитет» туса хунă. Çав комитет Нью-Йоркра вырăс войскисем Александр Невский ертсе пынипе нимĕçсен йытă-рыцарĕсене аркатса тăкни 700 çул тултарнă ятпа митинг туса ирттернĕ. Митинга 3.000 çын таран пынă; кунта пуринчен ытла ĕлĕк Российăран куçса кайнă Америка граждăнĕсем пулнă.

Митингра Молотов юлташ 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче каланă сăмаха тата Сталин юлташ 1942 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар кунĕ ячĕпе кăларнă приказа вуласа панă. Митингри халăх вĕсене тăвăллăн алă çупса хапăлласа итленĕ. Геройла Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн ячĕсене асăнсан, кашнинчех митингра хĕрÿллĕн алă çупнă.

Митингра тухса калакансем пурте Хĕрлĕ Çара тата Совет халăхне ырă сунса саламланă.

Америкăра славянсен конгресĕ уçăлас умĕн

НЬЮ-ИОРК, апрелĕн 21-мĕш (ТАСС). Америкăра славянсен Детройтра уçăлакан конгресне хатĕрленме тытăннă. Конгресс организаторĕсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи тĕрлĕ профсоюз организацийĕсем, автомобильсем тăвакан çĕрте ĕçлекен рабочисен, горнякссен, çĕвĕçсен тата промышленноçăн ытти отраслĕсенче ĕçлекен рабочисен организацийĕсем, вĕсен членĕсем нумайĕшĕсем славянсем пулса тăраççĕ пулсан, пурте конгреса хăйсен делегачĕсене яраççĕ тесе пичетре пĕлтернĕ. Пĕлнĕ тăрăх, Чикаго, Мильвоки тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен ытти хулисенчи производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен ытти профсоюз организацийĕсем те делегатсем яраççĕ.

Америкăри профсоюз организацийĕсен конференцийĕ

НЬЮ-ИОРК, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Нью-Йоркра производствăллă профсоюзсен конференцийĕ пулса иртнĕ. Çав конференцире 4.000 делегат пулнă. Вĕсем 500 пин çынна пĕрлештерсе тăракан 253 организацирен килнĕ.

Конференцире профсоюз организацийĕсен çывăхри вăхăтра мĕнле ĕçлемелли çинчен программа йышăннă. Çав программăра КПП-па АФТ (профсоюз организацийĕсем) хушшинчи çыхăнăва вăйлăлатмалли çинчен, çар производствине ÿстерес тата хăвăртлатас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя мобилизацилемелли çинчен каланă.

Сиэттльре те профсоюзсен конференцийĕ пулса иртнĕ. Унта вăрçăра çĕнтерес тесен мĕн-мĕн тума кирли çинчен сÿтсе-явнă. Конференцире чугун çул çинче ĕçлекенсен профсоюзĕсен 400 представителĕ пулнă.

Румыни çарĕн генштаб начальникĕ пулса ĕçленĕ Якобича арестленĕ

АНКАРА, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Журналистсем пĕлтернĕ тăрăх, Румыни çарĕн генштаб начальникĕ пулса ĕçленĕ Якобича, Хĕвелтухăç фронтне Румыни войскисен çĕнĕ контингенчĕсене ярасшăн мар пулнăшăн, нумаях пулмасть арестленĕ. Ăна арестлеме Антонеску приказ панă. Халĕ вăл Румыни тĕрмисенчен пĕринче ларать.

Швеци çинче Германи самолечĕсем палăртнă курспа вĕçмен

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Швецин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 17-мĕшĕнче Германин самолетне, Норландăн кăнтăр пайĕнче (Швецин çурçĕр пайĕнче) вĕçнĕскере, икĕ хутчен пăшал персе асăрхаттарнă. Мĕншĕн тесен самолет палăртнă курспа вĕçмен.

Гитлеровецсен Чехословакири ирсĕр ĕçĕсем

СТАМБУЛ, апрелĕн 18-мĕш. (ТАСС). «Чехия тата Моравия протекторатĕнче» чĕртаварпа продовольствисене пĕтернĕ тата Германи влаçĕсенчен пытарнă фактсем йышлăнса пыраççĕ. Гитлерла влаçсем çак саботажа пĕтерес тесе, çĕнĕ ирсĕр ĕçсем тăваççĕ. «Нейе Таг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Гитлер наместникĕ Гейдрих «протекторат» валли çĕнĕ законсем кăларнă. Çав законсем тăрăх, чĕртавара е продовольствие пĕтерекенсене тата пытарса юлакансене пурне те персе пăрахмалла е каторгăра ĕçлеме ямалла.

Гитлеровецсен влаçĕсем «протекторатра» халăх перекетлесе пухнă укçатенкe халăхран ирĕксĕрлесе пухма тытăннă. Çĕнĕрен кăларнă законсенчен пĕринче çапла палăртнă: кам та кам хăйĕн укçине перекет кассисене хывмасăр хăй патĕнче усрать, çавна е тĕрмене хупса лартмалла, е каторгăра ĕçлеме ямалла. Çав вăхăтрах вĕсен укçисене туртса илмелле, тенĕ.

Германире тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенче резина çитмест

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, экономикăллă вăрçă министерствин официальнăй представителĕ Германире тата Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче резина çитменнине кăтартса паракан даннăйсене каласа панă. Голландирен пĕлтернĕ тăрăх, унта автомобиль кустăрмисен резинисене пробка йывăççинчен тăваççĕ. Данире велосипед кустăрмисен резинисене хутран тума май пуррине тупнă, çавăн пек резина пĕр уйăха пырать. Будапештра автобуссене рельссем тăрăх çÿретес тĕлĕшпе опытсем тăваççĕ. Кивелнĕ йышши автобуссене трамвай тăрăх çÿреме юракан йывăç кустăрмасем çине лартнă. Çак опыт ăнăçуллă пулсан, кивелнĕ йышши автобуссене вара пурне те рельссем тăрăх çÿреттерме тытăнаççĕ.

—о—

Совет Союзĕ тăрăх

КĂМРĂК ТУХАТЬ!

Мускав патĕнчи нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă бассейнра оккупаци вăхăтĕнче стройран тухнă шахтăсене юсаса çитереççĕ. Унти нумай шахтăсем çĕршыва кăмрăк параççĕ те ĕнтĕ, вĕсенче кăларакан кăмрăк шучĕ кунсеренех вăйлăн ÿссе пырать. СССР Совнаркомĕ çак бассейна юсаса çитерме кирлĕ укça-тенке пĕр чăрмавсăр парса тăрать. (ТАСС).

АПАТ-ÇИМĔÇ ПРОМЫШЛЕННОÇĔН ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕНЕ КИРЛĔ ЧĔРТАВАРĂН БАЗИ

Ярославль облаçĕнче апат-çимĕç промышленноçĕн предприятийĕсене кирлĕ чĕртавар бази ÿссех пырать. Ростовски, Петровски, Гаврилово-Ямски районсенчи колхозсем çак çура малтанхи хут 500 гектар çине сахăр кăшманĕ акаççĕ тата апат-çимĕç комбиначĕсем — 50 гектар акма палăртнă. Çав кăшманран сахăр шерепечĕ туса кăларма пуçлаççĕ. Колбаса фабрикисем тата ытти предприятисем те колбаса тума аш-какай чылай илеççĕ. Çав шутпа Облпищепром Чухлома районĕнчи ахаль выртакан çĕр лаптăкĕсем çинче сурăх ĕрчетмелли совхоз организацилет. Совхозра 500 сурăх пулмалла, вĕсем пурте романовски йăхран. Апат-çимĕç комбиначĕсем çумĕнче выльăх-чĕрлĕх самăртса пусмалли пунктсем уçаççĕ, вĕсенче 1.500 сысна, 540 сурăх тата 150 ĕне тăрантарса самăртмалла. (ТАСС).

Пĕлтерÿ

Апрелĕн 24-мĕшĕнче каçхине 8 сехет те 30 минутăра Хĕрлĕ Çар Суртĕнче докладчиксемпе агитколлективсен руководителĕсем валли инструкциллĕ доклад пулать. Докладăн теми:

«Майăн 1-мĕш — Пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн пĕрлĕх кунĕ».

Докладчик — **Мошнин юлташ.**

Парторганизаци секретарĕсен уйăрнă докладчиксем пурте доклада итлеме каймалла тăвас пулать.

ВКП(б) Хула Комитечĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Государственному Тресту НКЭП СССР
ТРЕБУЮТСЯ:
плотники, каменщики, бетонщики, столяры, маляры, штукатуры, подсобники, уборщицы, курьеры и сторожа.
Общежитием и столовой обеспечиваются.
Обращаться по адресу: Кузнечная, 29, отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 105 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: м